Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчепе тухать

50 (7690) № ✻ Юн кун, 2009 çулхи июнĕн (çĕртме) 24-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

## Паян – Республика кунĕ

**ХАКЛĂ ЕНТЕШĔМĔРСЕМ!**

Сире Республика кунĕ ячĕпе чĕререн саламлатăп! Каллех нумай нациллĕ Чăваш Енĕн çыннисене пĕрлештерсе тăракан тăван çĕре çĕнетсе улăштарассипе тата пултарулă ĕçпе сыхăннă уяв çитсе килчĕ. Нумай çул хушши ĕнтĕ июнĕн 24-мĕшĕ республикăн çĕнĕ историйĕн пуçламăшĕ пулса тăрать. Хамăр пухнă опыт çине таянса эпир экономикăпа социаллă тата культура аталанăвĕн малашлăхĕсене палăртатпăр.

Нумай пулмасть Чăваш Ен пурнăçĕнче пĕтĕм çĕршывшăн пысăк пĕлтерĕшлĕ пулса тăракан пулăмсем сахал мар пулса иртрĕç. Кăçалах Çĕнĕ Шупашкарта тĕнче шайĕнчи çĕнĕ технологисемпе усă курса хĕвел батарейисен производствине тума тытăнаççĕ. Вăл Раççейре чи пысăккисенчен пĕри пулать. 20 миллиард тенкĕ тăракан çак проекта пурнăçа кĕртнĕ май пиншер ĕç вырăнĕ йĕркелеме май пулĕ. Республика çĕршывăн çĕнĕ экономика отраслĕ – хĕвел энергетики – çуралнă вырăн пулса тăрĕ. Раççей Президенчĕ Шупашкар шыв хранилищин вишине 68 метра çити хăпартма проект документацине хатĕрлесе çитерессине вĕçлеме хушнă. Çакă вăл экологи, энергетика, карапсем çӳресси тата ытти тĕлĕшпе чылай ыйтусене татса пама май парĕ.

Çирĕп пулни тата хăйсене ĕненни, ăс-хакăл вăйĕ тата Тăван çĕршыва юратни Чăваш Республикин çыннисене çак çăмăл мар вăхăтра ура çинче тăма кăна мар, палăрмалла ситĕнӳсем тума та май параççĕ. Республика картти çинче пурăнмалли çуртсемпе бассейнсемлĕ физкультурăпа спорт комплексĕсем, хальхи вăхăтри медицина, вĕрентӳ, культура центрĕсем çуралаççĕ. Хамăр çĕршыври тата ют çĕршывсенчи инвесторсене явăçтарнипе промышленноçра пысăк проектсем пурнăçа кĕреççĕ. Республикăн агропромышленноçть комплексĕ тăнăç аталанать. Пусă çаврăнăшне кĕртнĕ çĕр лаптăкĕсем ӳсеççĕ. 40 пин ытла уйрăм хуçалăх пахалăхлă тата экологи тĕлĕшпе таса продукци туса хатĕрлет. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли ятарлă пысăк комплекссем тăваççĕ.

«Çĕр – тухăç амăшĕ, ĕç – тухăç ашшĕ»,– тенĕ чăвашсен ваттисен сăмахĕнче. Çĕр ĕçченĕсен çулталлăкĕнче Чăваш Енре пурăнакансем çĕнĕ чиккĕсене çĕнсе илме пултарĕç, хăйсен ырми-канми ĕçĕпе тăван республикăн ятне татах çӳллĕрех шая çĕклĕç тесе шанса тăратăп. Хаклă ентешĕмĕрсем, сире çирĕп сывлăх, пуçланă ĕçре ăнăçу, телей тата юрату сунатăп!

**Чăваш Республикин Президенчĕ Н.В. ФЕДОРОВ.**

**ХИСЕПЛĔ ЕНТЕШСЕМ!**

Сире пурне те Республика кунĕ ячĕпе чун-чĕререн саламлатăп. Чăвашсен çак аслă уявĕ Муркаш районĕн историйĕнче те ырă улшăнусемпе çырăнса юлчĕ: иртнĕ çул Республика кунĕ умĕн район центрĕнче тахçанах кĕтнĕ физкультурăпа спорт комплексĕ хута кайрĕ, Кашмашра тĕслĕхлĕ Культура çурчĕ ĕçлеме пуçларĕ, район территорийĕнче нихçанхинчен те нумайрах çул турăмăр, юсарăмăр, район центрĕн сăн-сăпатне те палăрмаллах улăштартăмăр. Ку çеç те мар. Муркаш çĕрĕн ĕçчен çыннисен шухăш-кăмăлĕ те тĕпренех улшăнчĕ. Хамăр пурнăçа хамăрăнах лайăххатмаллине тепĕр хут курса ĕнентĕмĕр. Паян пирĕн пĕр тĕллев – тунă чиккĕрен пĕр шит те каялла чакмалла мар. Çăмăл мар лару-тăрурах аталану çулĕпе малалла каймалла.

Сирĕн ӳсĕмлĕ ĕçĕрте эсир тăван районна, республикăна, çĕршыва юратни яр уççăн курăнать. Уяв умĕн сире пурсăра та хăвăрăн тивĕçĕре пысăк яваплăхпа, тӳрĕ кăмăлпа пурнăçланăшăн, мал ĕмĕтлĕ пулнăшăн, район аталанăвĕшĕн тăрăшнăшăн чĕререн тав тăватăп.

Малашне те эсир, нимĕнле йывăрлăха пăхмасăр, ӳсĕмлĕ вăй хурасса, районăмăр республикăра ырă ятлисен шутĕнче пултăр тесе тăрăшасса шанса тăратăп.

Пурне те çирĕп сывлăх, ăнăçу, иксĕлми вăй-хал, телейлĕ вăрăм кун-çул сунатăп.

**Район пуçлăхĕ Ю.А. ИВАНОВ.**

## Республика кунĕ йыхравлать



**Паян уявлакан Республика кунĕн вишинче тĕрлĕ ĕçлĕ тĕл пулусемпе выставкăсем иртеççĕ.**

**Июнĕн 20-мĕшĕнче Шупашкарта «Регионсем пĕрпĕринпе килĕштерсе ĕçлесси» курав уçăлчĕ. Раççейĕн 7 регионĕнчи тата чикĕ леш енчи çĕршывсенчи 180 предприяти 20 ытла отраслЬпе - электротехникăран пуçласа туризм таранах – хăйсен ĕçĕсене кăтартать.**

**Курава Çĕр ĕçченĕн çулталлăкне халалланă пысăк экспозици тĕп вырăн йышăнать.**

**Курава Финляндири сĕтел-пукан туса кăларакан, йывăçпа ĕçлекен 10 организаци хутшăнать.**

**- Курав хисепе тивĕçлĕ, илемлĕ, - тенĕ Н.В. Федоров экспозицисемпе паллашнă хыççăн.**

**Ĕнерех тĕп хулара «Экономика: тĕнчери финанс кризисĕн тапхăрĕнче ăна йĕркелесе пырасси» темăпа иртекен Шупашкарти иккĕмĕш экономика форумĕ ĕçлеме пуçларĕ.**

**Республика кунĕн программи культура пулăмĕсемпе те пуян. Халăх пултарулăхĕн «Раççей çăл куçĕсем» вун çиччĕмĕш фестивалĕ ĕнер уçăлчĕ. Унта Раççейри 21 регионти тата чикĕ леш енчи виçĕ çĕршыври коллективсем хутшăнаççĕ.**

**Çаван пекех ĕнер фейерверксен Пĕтĕм тĕнчери иккĕмĕш фестивалĕ уçăлчĕ.**

## Район уй-хирĕсенче

## «Симĕс ĕç çи» вăй илет

Вăхăт утă уйăхнелле çывхарнă май çут çанталăкăн уяр кунĕсемпе туллин усă курса пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенче тата килти хушма хуçалăхсенче выльăх апачĕ хатĕрлес тапхăр вăй илсе пырать.

Район администрацийĕн ял хуçалăх пайне пĕрлешӳллĕ тата хресчен (фермер) хуçалăхĕсем тăратакан оперативлă кăтартусемпе пур çĕрте те выльăх апачĕ хатĕрлес ĕçе кӳлĕнни курăнать. Июнĕн 23-мĕшĕ тĕлне районĕпе нумай çул ӳсекен курăксене пурĕ 854 гектар çинче (8,5 процент) çулнă. Иртнĕ шăрăх кунсенче пĕтĕмпе 201 тонна утă хатĕрленĕ, 50 тонна сенаж хывнă, 2 тонна витаминлă курăк çăнăхĕ янтăланă.

Утă хатĕрлес ĕçе хальлĕхе «Оринино» (11 тонна), «Передовик» (70), Суворов яч. хис. (70), «Ударник» (40), Чкалов яч. хис. (10) хуçалăхсенче ăнăçуллăрах йĕркелени курăнать. «Ударник» хуçалăх 50 тонна сенаж хывни тата «Моргаушская» чăх-чĕп фабрики 2 тонна витаминлă курăк çăнăхĕ янтăлани выльăх апачĕ хатĕрлес ĕç вăй илсе пыни çинчен калать.

**ХАМĂР ИНФ.**

**РАЙОНТИ ХУÇАЛĂХСЕНЧЕ ÇУМПА КĔРЕШЕС ĔÇСЕМ ЕПЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТНИ (июнĕн 23-мĕшĕ тĕлне)**

**Колонкăсенче: 1. Хуçалăхсем. 2. Гербицид сапмалли план. 3.Сапнă. 4. Çĕр улми речĕсене пĕрремĕш кăпкалатнă. 5. Çĕр улми речĕсене иккĕмĕш кăпкалатнă (гектарпа).**

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| Е. Андреев яч. хис. | 689 | 500 | – | – |
| «Волга» | 244 | 244 | – | – |
| «Восток» | 380 | 380 | 13 | 13 |
| «Герой» | 647 | 576 | 97 | – |
| К. Иванов яч. хис. | 0 | 0 | 0 | 0 |
| «Агро-Урожай» | 0 | 0 | 0 | 0 |
| Ильич яч. хис. | 572 | 572 | 103 | 103 |
| ВТМ | 110 | 110 | – | – |
| Ленин яч. хис. | 430 | 250 | 20 | – |
| «Лидер» АФ | 0 | 0 | 0 | 0 |
| «Оринино» | 737 | 450 | 40 | 40 |
| «Передовик» | 678 | 678 | 8 | – |
| «Свобода» | 1215 | 550 | 190 | 50 |
| «Сеятель» | 490 | 258 | – | – |
| Суворов яч. хис. | 1268 | 1268 | – | – |
| «Рассвет» АФ | 530 | – | – | – |
| «Ударник» | 1124 | 1124 | 270 | 220 |
| Чапаев яч. хис. | 480 | 270 | 18 | 18 |
| Чкалов яч. хис. | 437 | 437 | 13 | 13 |
| Мичурин яч. хис. | 650 | 400 | – | – |
| «Хлебороб» | 135 | 135 | – | – |
| «Колос» АПФ | 200 | 200 | – | – |
| **Районĕпе** | **13612** | **10361** | **1445** | **776** |

## Райадминистрацире

## Хастар ĕçпе тивĕçнĕ

***Район администрацийĕн пуçлăхĕн 2009 çулхи майăн 28-мĕшĕнчи 324 № йышăнăвĕпе çаксене район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăлама йышăннă:***

1. Çитĕнекен ăрăва вĕрентсе воспитани парассипе тунă çитĕнӳсемшĕн тата нумай çул хушши тăрăшса ĕçленĕшĕн **Вена Николаевна ИВАНОВАНА**, Муркаш шкулĕн биологи учительне.

2. Прогрессивлă информаци технологийĕсене аталантарассипе тата муниципаллă управлени практикине пурнăçа кĕртессипе тунă çитĕнӳсемшĕн **Надежда Валерьевна ГРИГОРЬЕВАНА**, район администрацийĕн информаципе тивĕçтерессин пайĕн ертсе пыракан специалист-экспертне.

3. Продукци тирпейлес ĕçре нумай çул хушши тăрăшса вăй хунăшăн **Зоя Александровна АЛЕКСАНДРОВАНА**, Юнкăри сĕт цехĕ – «Вита» чикĕллĕ яваплăхлă обществăри директорăн финанс ыйтăвĕсемпе ĕçлекен çумне.

## Çамрăк армеецсен XXXXI вăййисем

## Малиновка вăрманĕнче – республикăри ăмăртусем

Июнĕн 26-мĕшĕ – июлĕн 1-мĕшĕсенче пирĕн районта Малиновка вăрманĕн уçланкинче Чăваш Республикинчи çамрăк армеецсен юхăмĕн «Зарницăпа» «Орленокăн» финалти XXXXI вăййисем иртеççĕ. 5 куна пыракан ăмăртусенче пĕтĕмпе çул çитмен 1200 çамрăк тĕрĕслĕ хăйĕн пултарулăхне.

Июнĕн 26-мĕшĕнче финалти вăййа хутшăнакансем килсе вырнаçнă хыççăн 10–18 сехетсенче «Теори блокĕ» конкурс иртет. Ун хыççăн вара алăпа çапăçса, «Радист», «Çамрăк армеецсем – малалла» ăмăртусемпе мастер-класс пулать.

Июнĕн 27-мĕшĕнче 10 сехетре «Зарницăпа» «Орленокăн» XXXXI вăййисене хаваслă лару-тăрура уçаççĕ. Унта Чăваш Республикин Президенчĕ Н.В. Федоров килет. Çак кун «Стайлă та йăрăс пӳллĕ – хисепе тивĕçлĕ» ятпа конкурссем иртеççĕ. Çаван пекех алăпа çапăçса кам вăйлине пĕлĕç.

Вăйăсен виççĕмĕш кунĕнче туристсен чăрмав паллисем урлă каçассипе, велосипедпа тĕрлĕ фигурăсем туса ярăнассипе, «Радист» ăмăртусем пулаççĕ. Каçхине «Автор юррисен республикăри конкурсĕ» çамрăк армеецсене пĕр çĕре пухĕ.

Июнĕн 29-мĕшĕнче чăрмав паллисене çĕнтерессипе, шывра ишессипе, «Вут-çулăмлă чикĕ» конкурссем йĕркелеççĕ. Çак виçĕ кунхи ăмăртусем хыççăн каçхине çар лисчĕсен конкурсне те ирттереççĕ.

Июнĕн 30-мĕшĕ «Морское троеборье», «Военно-прикладное многоборье» конкурссемпе асра юлать. Çаван пекех вăй тата вăр-варлăха тĕрĕслекен ăмăрту пулать. Каçхине «Туслăх вучахĕ» тӳпене çутатĕ.

Июлĕн 1-мĕшĕнче вара «Зарницăпа» «Орленок» вăййисене хаваслă лару-тăрура хупаççĕ.

**Л.ПАВЛОВА.**

## Асăнупа хурлăх кунĕ

## Паттăрсем хыпарсăр çухалмаççĕ

1941 çулхи июнĕн 22-мĕшĕнче ирхи 4 сехетре пирĕн çĕршыва фашистла Германи вăрçăпа тапăнса кĕнĕ. Вăрçă... Çак хăрушă кунран 68 çул хыçа юлчĕ. Истори анлăшĕнче вăл пысăках вăхăт та мар. Çавăнпах вăл паян та пире хăй пирки систерет. Систерет те... вăрçăран катара тăма ыйтать.

Уйкас Янасал ял тăрăхĕнчи Васкассинчен фронта тухса кайнă Алексей Ивановăн шăпи пирки 68 çул никам та пĕлмен. Анчах паттăрсем хыпарсăр çухалмаççĕ тени пирĕн ума иртнĕ кунсенче çĕнĕ тĕрĕслĕхпе тухрĕ. 1941 çулта фронта тухса кайнă Алексей Иванов сержант 133-мĕш стрелковăй дивизин 681-мĕш полкĕнче службăра тăнă. 1942 çулхи ноябрĕн 7-мĕшĕнче пирĕн ентеш ертсе пыракан рота е взвод Ржев хули таврашĕнчи хаяр çапăçусене хутшăннă. А. Иванов Тăван çĕршыв ирĕклĕхĕшĕн фашизмпа çапăçса Зубцовски районĕнчи Борщево ялĕ çывăхĕнче пуç хунă. Паттăр салтакăн юлашкисене вырăнти «Победа» шырав ушкăнĕ тупнă. Унăн ятне медальон урлă пĕлме пултарнă.

Çапла вара Тăван çĕршыван Аслă вăрçинче хыпарсăр çухалнă тепĕр ентеш ячĕ пирĕн пата таврăнчĕ.

Алексей Иванович Ивановăн икĕ ывăлĕ те аслă пĕлӳ илсе ачасене вĕрентес ĕçре вăй хунă. Вĕсем пирĕнтен уйрăлса кайнă пулин те, паттăр салтакăн 5 мăнукĕпе 7 прамăнукĕ аслашшĕн ватă аслашшĕ çапăçу хирĕнче чăн-чăн салтакла пуç хунине пĕлчĕç. Хыпарсăр çухалнă тени 67 çултан чăл-пар саланчĕ.

**А. БЕЛОВ.**

## Саламлатпăр



Хисеплĕ те хаклă çыннăмăра, хĕрĕме, йăмăка тата аппана, аннене, хунямана, кукамая, асаннене – Оринин ял тăрăхĕнчи Пиккикассинче пурăнакан, ĕмĕрĕпех «Оринино» хуçалăхра бухгалтерта ĕçлекен **Антонина Егоровна ВАСИЛЬЕВАНА** 55 çул тултарнă ятпа чи ăшă сăмахсемпе тулли кăмăлтан саламлатпăр. Эсĕ пирĕн пурнăç илемĕ, малашлăх ăраскалĕ. Хамăрпа юнашар сан пек ăнăçлă та телейлĕ çын пулнишĕн эпир пурсăмăр та пĕр çын пек савăнатпăр татах нумай çул ырă-сывă пурăнма çирĕп сывлăх сунатпăр, телейӳпе ăнăçу тăтăшах юнашар пуласса шанатпăр. Кукамăшпе пĕрлех хăйĕн çуралнă кунне Константин Степанов паллă тăвать. Ăна та çĕршыва юрăхлă ӳссе çитĕнме, шкулта лайăх вĕренме ăнăçупа сывлăх сунатпăр.

**Саламлаканĕсем: ашшĕ, ывăлĕ, хĕрĕ, кинĕ, кĕрĕвĕ, мăнукĕсемпе йышлă тăванĕсем.**

## Иккĕмĕш çур çул валли çырăнтараççĕ

**Хаклă вулакансем! Районти «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçата иккĕмĕш çур çулта илсе тăма унччен хакпах çырăнтараççĕ. Ултă уйăха çырăнмалли хак – 191 тенкĕ те 70 пус.**

**Васкăр! Райхаçата çырăнмалли тапхăр çак эрнере вĕçленет.**

**Райхаçат редакцийĕ.**